Çĕнтерӳ ялавĕ

Муркаш район хаçачĕ

1944 çулхи çу уйăхĕн 5-мĕшĕнченпе тухать

54 (8720) № * Юнкун, 2019 çулхи утă (июль) уйăхĕн 17-мĕшĕ * Хакĕ ирĕклĕ

Раççейре

Астăвăмпа мухтав çулталăкĕ

2020 çула Раççей Федерацийĕнче Астăвăмпа мухтав çулталăкĕ тесе ирттерĕç.

Кун пирки Раççей Федерацийĕн Президенчĕ Владимир Путин 2019 çулхи июлĕн 8-мĕшĕнче алă пусса çирĕплетнĕ указра палăртнă.

Çулталăка çĕршывра истори астăвăмне упрас тата Тăван çĕршывăн Аслă вăрçинче Çĕнтерӳ тунăранпа 75 çул çитнине халлаçа ирттерме йышăннă.

Çулталăкри ĕçсене Раççейри «Çĕнтерӳ» йĕркелӳ организацийĕ пурнăçласа пыма тивĕç. Унăн ĕçне Президент Администрацийĕн ертӳçи контрольлесе тăрасси паллă.

Право информацийĕн официаллă интернет-порталĕнчен.

2020 çулхи кану кунĕсем

РФ Правительстви çитес çулхи кану уяв кунĕсен календарьне çирĕплетнĕ. Раççей çыннисен çулталăк пуçламăшĕнче январĕн 1-мĕшĕнчен тытăнса 8-мĕшĕччен канмалла пулать. Январĕн 4 тата 5-мĕшĕсенчи уяв кунĕсем кану кунĕсене килнĕ май, ку кану кунĕсене майăн 4 тата 5-мĕшĕсене куçарма йышăннă. Çапла вара çитес çул майăн 1-мĕшĕнчи каникул майăн 5-мĕшĕченех тăсăлĕ. Çĕнтерӳ кунĕнчи канмалли кунсем вара 3 куна – майăн 9-мĕшĕнчен тытăнса 11-мĕшĕччен пырĕç.

Виçшер кун канмалли уяв кунĕсем 2020 çулта татах пулаççĕ: Тăван çĕршыв хӳтĕлевçин кунĕнче – февралĕн 22 – 24-мĕшĕсенче, Пĕтĕм тĕнчери хĕрарăмсен кунĕнче – мартăн 7 – 9-мĕшĕсенче тата Раççей кунĕнче – июнĕн 12 – 14-мĕшĕсенче.

Эрне варринче пĕр кун ноябрĕн 4-мĕшĕнче, Халăх пĕрлĕхĕн кунĕнче канмалла.

«Российская газета» хаçатран.

Пĕчĕк тата вăтам бизнес

Хастар предпринимательсем

Сăн ӳкерчĕкре районти хастар предпринимательсене куратăр. Район аталанăвĕнче вĕсен тӳпи те пĕчĕк мар, çавăн пекех çак предпринимательсем районта иртекен мероприятисенче тата уйрăммăн та ыркăмăллăхпа палăраççĕ. Предпринимательсен кунĕнче вĕсем уяв сцени çине хăпарма тивĕç пулчĕç. Ольга Бычкова (сулахайри) тата Эльвира Кадыкова (сылтăмри) уйрăм предпринимательсем Чăваш Республикин Экономика аталанăвĕн министерствин Хисеп грамотине тивĕçрĕç, Полина Беляева предпринимателе вара Чăваш Республикин предпринимательсен прависене хӳтĕлекен уполномоченнăй грамотипе чысларĕç.

Р. ИЛЛАРИОНОВА сăн ӳкерчĕкĕ.

Районта

Выльăх апачĕ хатĕрлеççĕ

Районта выльăх апатне хатĕрлес ĕçсем малалла пыраççĕ. Район администрацийĕн пуçлăхĕ Ростислав Тимофеев ку ĕçе «Путь Ильича» агрофирмăра еплерех йĕркеленипе тунтикун вырăна тухса паллашнă.

Хуçалăхра ĕнерхи кун тĕлне вара 140 тонна утă хатĕрленĕ тата 2 пин тонна сенаж хывнă. Агрофирма хуçалăхĕн тĕп агрономĕ Инна Егорова палăртнă тăрăх, тĕштырă тата пăрça йышши культурăсем 750 гектара майлă йышăнаççĕ, вăл шутра – кĕрхи культурăсем 100 гектара майлă, ытти – çурхи тулăпа урпа. Хуçалăх кăçал 185 гектар куккурус акнă. Пĕр çул ӳсекен курăк пурĕ 665 гектар.

Сăмах май, районти хуçалăхсенче ĕнерхи кун тĕлне утă 3614 тонна хатĕрленĕ, сенаж 10 пин тоннăна яхăн, силос 2740 тонна хывнă.

Социаллă контрактсем

Республикăри сахал тупăшлă çемьесем тата сахал тупăшлă пĕччен пурăнакан граждансем, вĕсенчен килмен сăлтавсене пула пĕр çын пуçне тивекен тупăшĕ Чăваш Республикинче пурăнма кирлĕ минимумран (хальхи вăхăтра 9189 тенкĕ) пĕчĕкрех пулсан, социаллă контракт çырса социаллă пулăшăва тивĕçме пултараççĕ.

Контракт вĕçленес тĕле çыннăн программăпа килĕшӳллĕн ĕçлеме вырнаçмалла е харпăр хăйĕн ĕçне пуçарса ямалла.

Районти социаллă хӳтлĕх пайĕн ертӳçи Валентина Аникина пĕлтернĕ тăрăх, июлĕн 15-мĕшĕ тĕлне Муркаш районĕнче 20 социаллă контракт çырнă.

13 проект пурнăçланă

Пуçарулăх бюджечĕн мелĕпе Муркаш районĕнче кăçал 19 проект пурĕ 21 млн тенкĕлĕх пурнăçламалла. Вĕсенчен 16-шĕ çул тăвассипе çыхăннă (пурĕ 11,5 км тăршшĕ). Ыттисем çаксем: ача-пăча валли вылямалли площадка тăвассипе 1 проект (Чуманкасси ял тăрăхĕ), контейнер площадкине тăвассипе 1 проект (Хорнуй), шыв башнине юсассипе 1 проект (Юнкă).

Диспансеризаци

Хĕрĕхрен иртнисен – кашни çулах

Раççейре 40 çултан иртнĕ çынсем валли тепĕр канмалли кун туса хурасшăн. Диспансеризаци тĕрĕслевне тухма. «Российская газета» пĕлтернĕ тăрăх, ку сĕнĕве хальхи вăхăтра РФ Ĕç министерствинче пăхса тухаççĕ.

Çакă 40 çул тултарнă тата аслăрах çынсен кăçалтанпа диспансеризацие кашни çул тухмаллипе çыхăннă. Экспертсем каланă тăрăх, çак куна тĕллевлĕ усă курнине сăнлама çăмăл пулмалла, мĕншĕн тесен çынна диспансеризаци тухнине çирĕплетекен справка пама тивĕç.

18 – 39 çулти çынсен вара диспансеризацие малтанхи пекех виçĕ çулта пĕрре тухмалла.

Муркаш район тĕп больницин поликлиника ертӳçи Галина Федотова ăнлантарса панă тăрăх, ку тараннчен çынсене профилактика медицина тĕрĕслевне уйрăммăн, диспансеризацие уйрăммăн явăçтарнă. Кунсăр пуçне усал шыçă чирĕсене тупса палăртма пулăшакан тĕрĕслевсем ирттересси те ятарлă тĕрĕслев мелĕпе иртнĕ.

Халĕ вара, июнь уйăхĕнчен пуçласа, 40-рен иртнĕ çынсем валли çак тĕрĕслевсене пĕтĕмĕшле диспансеризацине пĕрлештернĕ. Çавăнпа та Муркаш район тĕп больницинче кăçалхи июнь уйăхĕччен профилактика медицина тĕрĕслевне миçе çын хутшăннине уйрăммăн палăртнă пулсан (вĕсем пилĕк уйăхра 1103 çын пулнă), июнь уйăхĕнченпе вара медицина профилактика тĕрĕслевĕ диспансеризаци шутне кĕме тытăннă.

Галина Федотова пĕлтернĕ тăрăх, кăçалхи çур çулта районти 3 пин ытла çын диспансеризаци тĕрĕслевне тухнă. Пуçласа тупса палăртнă чирсем пурĕ 144 регистрациленĕ. Вăл шутра: усал шыçă чирне – 1, юн чирне – 15, эндокрин тытăмĕн чирĕсене – 32, сахăр диабетне – 8, юн çаврăнăш чирĕсене – 76 (вăл шутра юн пусăмĕ пысăкки – 47, чĕрен ишеми чирĕ – 19), сывлав органĕсен чирне – 2, апат ирĕлтерессипе çыхăннă чире – 12 тата ыттине те. Тĕрлĕ чир пуçарма пултаракан сăлтавсем пирки каланă май, поликлиника ертӳçи диспансеризаци тухнисен пысăк пайĕн – 1288 çыннăн юн пусăмĕ пысăккине, 1350 ытла çыннăн холестерин шайĕ пысăккине, 144 çыннăн кĕлетке виçи кирлинчен нумайраххине, 800 ытла çын тĕрĕс мар апатланнине, 270 яхăн çын хусканусем питĕ сахал тунине асăнчĕ. Ку – уйрăм каласу.

40-рен иртнисем патне таврăнар. Диспансеризацие вĕсем 40 – 64 çулти çынсен ушкăнĕнче тухаççĕ. Вăл кашни çул иртет, анчах та хăш-пĕр тĕрĕслеве кашни çул тухмалла мар. Сăмахран, 40 çулта юнăн куçри пусăмне тĕрĕслесси, юнăн пĕтĕмĕшле анализне тăвасси, усал шыçă чирне тупса палăртма пулăшакан тĕрĕслевсем (арçынсенпе хĕрарăмсен уйрăмлăхĕ пур) хушăнаççĕ. Анчах та вĕсем кашни çул иртмеççĕ. 45 çулта акă хырăмлăх чирĕсене тупса палăртма пулăшакан тĕрĕслев хушăнать т. ыт. те.

65 çул тултарнă тата аслăраххисен те диспансеризаци кашни çулах иртет, анчах та каллех пур тĕрĕслев те кашни çул мар. Кунсăр пуçне, çул ӳсĕмне кура, хăш-пĕр тĕрĕслеве явăçтарма пăрахаççĕ.

18 – 39 çултисен диспансеризаци ку тараннчен хăнăхнă йĕркепех пулса пырать – виçĕ çулта пĕрре. Сăмахран, çын 18 çулта диспансеризаци тухрĕ пулсан, 19 çулта тата 20 çулта унăн профилактика медицина тĕрĕслевне (тĕрĕслев шучĕ сахалрах), 21 тултарсан вара каллех диспансеризацие хутшăнмалла.

Пĕлтĕр 39 çул тултарнисем диспансеризаци тухнă пулсан та, кăçал 40 çул тултарнăран, вĕсене каллех диспансеризацие явăçтарĕç. Мĕншĕн тесен вĕсене, çул ӳсĕмне кура, çĕнĕ тĕрĕслевсем те кĕтеççĕ.

Н. НИКОЛАЕВА.

Лазаревсене чыслană

Юнкăпуçĕнчи Вера Егоровнăпа Михаил Родионович Лазаревсем çемье çавăрнăранпа 50 çул çитнĕ. Çак ятпа вĕсене кăçал пĕрремĕш хут ирттернĕ ял уявĕнче пысăк йышпа саламласа парнесем панă.

«Ылтăн» мăшăр ĕç ĕмĕрне тăван район аталанăвне халлланă. Çемье пуçĕ МСО-ра сварщикра тăрăшнă, мăшăрĕ тăван хуçалăхра вăй хунă. Икĕ ача çуратса ӳстернĕскерсем халĕ 5 мăнукĕпе те савăнаççĕ.

Н. НИКОЛАЕВА хатĕрленĕ.

Саламлатпăр

Хаклăран та хаклă, юратнă мăшăра, аннене, кукамая – Уйкас Турай ялĕнче пурăнакан **Альбина Юрьевна СЕМЕНОВĂНА** 50 çулхи юбилей ячĕпе ăшшăн

саламлатпăр. Вăрăм кунçул, пурăнма çирĕп сывлăх, иксĕлми вăй-хал, савăк кăмăл-туйăм сунатпăр. Çемьере юратупа килĕшӳ çеç хуçаланччăр. Яланах хаваслă та ырă, чунупа çамрăк пул, пирĕн тăван кил ăшшине упраса нумай çул пурăн.

Саламлакаенĕсем: мăшăрĕ, хĕрĕсемпе кĕрӳшĕсем, мăнукĕсем.

Социаллă пулăшу

Амăш капиталĕпе усă кураççĕ

Республикăри Социаллă пулăшу мерисемпе тивĕçтерекен центр 100 пин тенкĕпе танлашакан республика амăш (çемье) капиталне тӳлессипе малалла тимлет.

Республика шайĕнчи амăш капиталĕпе усă курма заявление Социаллă пулăшу мерисемпе тивĕçтерекен центрăн районсенчи социаллă хӳтлĕх пайĕсенче йышăнаççĕ.

Çулталăк пуçланнăранпа Муркаш районĕнчи 19 çемье амăш капиталĕпе усă курма заявлени çырса панă. Вĕсенчен 11 çемье укçа-тенкĕпе пурăнмалли условисене лайăхлатма усă курнă, 8 çемье – ачасене вĕрентме.

Аса илтеретпĕр, республика амăш капиталне çемьере виççĕмĕш е хыççăнхи ача çуралнă (усрава илнĕ) кунран виçĕ çул иртнĕ хыççăн кăна усă курма юрать. Ăна пурăнмалли условисене лайăхлатас тĕллевпе пурăнмалли çурт-йĕр туянма илнĕ кредитăн, вăл шутра ипотека кредичĕн тĕп парăмне тата проценчĕсене тӳлемелле чухне ку вăхăта кĕтмелле мар.

В. АНИКИНА,
районти социаллă хӳтлĕх пайĕн ертӳçи.

«Трактор» операци

Техника юсавлă пултăр

Çулленхи пекех, хуçалăхсенче вырма ĕçĕсем пуçланиччен, кăçал та республикăра «Трактор» операци ирттерме палăртнă. Кăçал вăл июлĕн 22-мĕшĕччен тытăнса августăн 22-мĕшĕччен пырать. Операци ирттересси пирки хăй тĕллĕн çӳрекен машинăсене тата ытти йышши техникăна пăхса тăракан республика патшалăх инспекцийĕн пуçлăхĕ ятарлă хушу кăларнă.

Операци пынă вăхăтра тракторсен тата ытти йышши техника хатĕрĕн техника шайне тĕрĕслеççĕ, вĕсем норматив документăсене тата стандартсене, ĕçри хăрушсăрлăх нормисене тивĕçтернине шута илеççĕ. Çавна валли вырăнсенче пĕрлехи рейдсем ирттерме палăртнă.

«Трактор» операци ирттерме тата унăн итогĕсене пĕтĕмлетме ĕç ушкăнĕ йĕркеленĕ. Ăна Гостехнадзорăн республика инспекцийĕн пуçлăхĕн çумĕ Е. Еландаев ертсе пырать. Рейдсем ирттерни пирки хаçатра пĕлтерсех тăрăпăр.

С. НИКОЛАЕВ,
Гостехнадзорăн район инспекцийĕн ертӳçи.

Пирĕн календарь

Турци çарне аркатнă

Июлĕн 18-мĕшĕ – Раççей çар историйĕн паллă кунĕ. Çак кун 1770 çулта Петр Румянцев ертсе пынипе вырăссен çарĕ туркăсен икĕ хут йышлăрах çарне çапса аркатма пултарнă. Хальхи Молдави территорийĕнчи Ларга юхан шывĕ çинче çакăн пек çĕнтерӳ тунăшăн çар пуçлăхĕсенчен пĕрремĕш çынна – Румянцева Çеттуй Георгийăн пĕрремĕш степень орденĕпе наградăланă.

Пĕчĕк тата вăтам бизнес

Район аталанăвĕнче вĕсен тӳпи те пур

Иртнĕ эрнекун районта Предпринимательсен кунĕ пулчĕ, питех те анлăн иртрĕ, уява район çыннисем те хутшăнма пултарчĕç.

Чи малтанах район администрацийĕнче предпринимательсемпе граждансен обществăлла йышăнăвĕ иртрĕ. Çынсен ыйтăвĕсем çине Чăваш Республикин предпринимательсен прависене хӳтĕлекен уполномоченнăй А. Рыбаков, район администрацийĕн экономика тата АПК аталанăвĕн пайĕн ертӳçи О. Тимофеева, пĕчĕк тата вăтам предпринимательствăна аталантарассин район администрацийĕн пуçлăхĕ çумĕнчи канашĕн ертӳçи В. Паладьев хуравларĕç. Йышăнăва çавăн пекех Чăваш Республикин гаранти фончĕн тата бизнес-инкубатор представителĕсем хутшăнчĕç.

Ыйтусем хатĕр продукцие вырнаçтарас пирки, тĕп продукцисĕр пуçне ытти тавар хатĕрлесе кăларасси пирки тата налукпа тĕрлĕ тӳлев парăмĕ çук, çак ĕçре пысăк стаж пухнă предпринимательсем тĕлĕшпе тĕрĕслев процедурисене сахаллатни ĕçре меллĕ пулассине палăртрĕç.

А. Рыбаков ыйтусене шута илчĕ, хатĕр продукципе тĕнче шайĕнчи куравсене хутшăнма сĕнчĕ, пĕчĕк бизнеса аталанма май паракан пулăшу мелĕсем çинче тĕплĕн чарăнчĕ. В. Паладьев районти предпринимательство субъекчĕсем контракт системи шайĕнчи суту-илĕвĕн конкурентлă процедурине хутшăнакансем сахаллăн пулнине палăртрĕ. Хыççăн предпринимательсем район администрацийĕн пуçлăхĕпе Р. Тимофеевпа тĕл пулчĕç, хăйсен сферинчи лару-тăрăва сӳтсе яврĕç.

Çавăн пекех предпринимательсем «Сеспель» предприятие **(сăн ӳкерчĕкре)** çитсе килчĕç. Кунта тĕнчери пахалăхăн стандарчĕсене тĕпе хурса экономикăн тĕрлĕ секторĕ – транспорт, строительство, ял хуçалăхĕ, нефтьпе газ комплексĕ, хими, апат-çимĕçпе тирпейлекен промышленноç валли ятарлă цистернăсем янтăлаççĕ, çулталăкра 1200 изделе туса кăлараççĕ. Чăваш логотипĕллĕ цистернăсене вара Раççей автотрассисем çинче кăна мар, ют çĕршывсен çулĕсем çинче те курма пулать. Предприяти «Повышение производительности труда и поддержка занятости» наци приоритет программине çĕршыври «пĕрремĕш хум» предприятисен йышĕнче хутшăнма тытăннă. Кăçалтанпа программа проект шайĕнче пурнăçланса пырать.

Предпринимательсен уявĕн каçхи программи Муркашра тăсăлчĕ. Район администрацийĕн пуçлăхĕ Р. Тимофеев, предпринимательсене саламланă май, вĕсен йышĕ ӳссе пынине, районта асăннă сферăн пĕлтерĕшĕ пысăккине, вăл шутра налук пухăнас тӳпе те ӳснине палăртрĕ.

Уява Чăваш Республикин гражданла оборона тата чрезвычайлă лару-тăру ĕçĕсен министрĕ В. Петров хутшăнчĕ. Вăл уява пухăннисене Раççей Федерацийĕн Президенчĕ В. Путин Федераци Канашне янă çырăвĕнче предпринимательствăна аталантарас çулйĕре тата чăрмава сирме палăртнă самантсене вуласа пачĕ, çакна вăя кĕртсе пынă май предпринимательствăна тĕрев парас тĕлĕшпе республика пуçлăхĕ М. Игнатьев Чăваш Ен Экономика аталанăвĕ, промышленноçпа суту-илӳ министерствипе вырăнти хăй тытăмлăх органĕсем умне пысăк задача лартнине палăртрĕ.

Чăваш Республикин предпринимательсен прависене хӳтĕлекен уполномоченнăйĕ А. Рыбаков «Малое и среднее предпринимательство и поддержка индивидуальной предпринимательской инициативы» наци проекчĕ шайĕнчи ĕçсем çинче чарăнчĕ, çавăн пекех вăл çăмăллăхлă кредитсемпе усă курма май пуррине палăртрĕ.

Уяв чыславсăр иртмерĕ. Э. Кадыковăпа О. Бычкова предпринимательсем Чăваш Республикин Экономика аталанăвĕн министерствин Хисеп грамотине тивĕçрĕç. Г. Михайлов (СПОССК «Кристалл Плюс» ертӳçи), С. Лукина, О. Афанасьева, П. Беляева предпринимательсем – Чăваш Республикин предпринимательсен прависене хӳтĕлекен уполномоченнăйăн Хисеп грамотине. Çавăн пекех Чăваш Республикин 100 чи лайăх ял хуçалăх предприяти йышне кĕнĕ районти хуçалăхсене ырăпа асăнчĕç.

Уява Ф. Васильев ячĕллĕ искусство шкулĕн вĕренекенĕсем, Çурлатринчи «Çеçпĕл» ансамбль, Ярославка Культура çурчĕ çумĕнчи «Кăмăл» ушкăн тата ытти юрăç, çавăн пекех чăваш эстрада çăлтăрĕ А. Московский тата икĕ ушкăн илем кӳчĕç. Предпринимательство кунне уяв фейерверкĕ вĕçлерĕ.

Р. ИЛЛАРИОНОВА сăн ӳкерчĕкĕ.

Шалти ĕçсен пайĕнче

Хăрушсăрлăхпа тивĕçтересси те район илертулехĕпе çыхăнна

Шалти ĕçсен Муркаш районĕнчи пайĕн иртнĕ çур çулти ĕçне пĕтĕмлетекен канашлу июлĕн 10-мĕшĕнче иртрĕ. Канашлăва Чăваш Ен Шалти ĕçсен министерствин полици пуçлăхĕн çумĕ Илья Воробьев, районти право сыхлав органĕсен ертӳçисем, район администрацийĕн пуçлăхĕ Ростислав Тимофеев тата общество представителĕсем те хутшăнчĕç.

Канашлури тĕп доклада пай пуçлăхĕ Владимир Степанов турĕ. Шалти ĕçсен министерствин полици пуçлăхĕн çумĕ сĕннипе ĕçри çивĕч ыйтусене доклад тунă май сӳтсе яврĕç. Çакна Илья Воробьев шалти ĕçсен районти пайĕн ĕçĕнче тимлĕх уйăрмалли самантсем пулнипе, вĕсене пурин те курса тăмаллипе сăлтавларĕ. Кусем вĕсем районта çынна хĕненĕ, ют пурлăха вăрланă факт сахал марри пе тата эрех ĕçекен нумайийипе çыхăннă. Районти криминогенлă лару-тăрупа, республикипе тишкерес пулсан, муркашсем варринче «вырнаçнине» палăртрĕ.

Мĕнле енсене ытларах тимлĕх уйăрмалла-ха? Пай пуçлăхĕн доклачĕ шăпах çак ыйтусене хурав парассипе тата малашнехи задачăсене палăртассипе çыхăнса пычĕ.

Çапла йывăр тата вăтам йывăр преступленисене уçса парассин кăтартăвĕ чакни, район территорийĕнче çынна вĕлернĕ факт иртнĕ çулти çак тапхăртинчен нумайраххи, экономика преступленийĕсем пысăк тимлĕх ыйтни, уголовлă ĕçсене тишкерессинче хăш-пĕр çитменлĕх палăрни, Интернетпа тата кĕсье телефонĕпе усă курса укçа вăрланă фактсем нумайланса пыни тата ытти пирки сăмах пулчĕ.

Иртнĕ çур çулта район территорийĕнче 130 преступлени пулнине регистрациленĕ. Преступленисене уçса парасси пĕтĕмĕшле 85,3 процентпа танлашнă. Çынсенчен килекен хыпарсен шучĕ пĕлтĕрхи çак тапхăртинчен виççĕре майлах чакнă, 2274 пулнă.

Административлă йĕркене пăснăшăн саккунпа килĕшӳллĕн яваплăх тыттарни пулма пултаракан преступленисене те асăрхаттарма пулăшать. Иртнĕ ултă уйăхра çапла 2475 çынна явап тыттарнă.

Районта эрех ĕçсе преступлени тунин ыйтăвне тĕплĕн сӳтсе явни вара муркашсем ку тĕлĕшпе республикăра палăрса тăнипе çыхăннă. Эрех ĕçнĕ хыççăн преступлени туни пĕлтĕрхи пĕрремĕш çур çулта 43 пулнă пулсан, кăçал – 58. Калаçу каллех фанфуриксем, сăмакун тата лицензилемен эрех сутни çине куçрĕ.

Район администрацийĕн пуçлăхĕ Ростислав Тимофеев районта фанфуриксем сутма чарас тĕллевпе ятарлă меморандум çырнине те аса илтерчĕ. (Меморандум тĕллевĕ районта пурăнакансен сывлăхне упрассипе тата çирĕплетессипе, ĕçлеме пултаракан ӳсĕмри çынсем вилессине чакарассипе, сывă пурнăç йĕркине сарассипе, алкоголь, вăл шутра апатланура юрăхсăр спирт пур шĕвеке ĕçнине чакарассипе çыхăннă. – **Авт.**) Апла пулин те çак меморандума алă пусма килĕшменнисем те пур-ха. Çавăнпа та район шайĕнче çитес вăхăтра ку ыйту патне тепĕр хут таврăнасси куçкĕрет. Профилактика ĕçне муниципалитетсен хăй тытăмлăх органĕсенчи должноçри çынсем пурте пурнăçлама тивĕç. Çавна май Ростислав Тимофеев ӳсĕрле руль умне ларса çула тухнăшăн праваран хăтарнă водительсен списокне те ял тăрăхĕсен пуçлăхĕсем патне çитерни ытлашши пулманнине каларĕ. Тепĕр тесен районта участковăйсем те çителĕксĕр (3 ваканси), çул-йĕр хăрушсăрлăх инспекторĕсем те нумайăн мар.

Илья Воробьев ялсенче спирт пур шĕвек е сăмакун сутакансене тупса палăртассипе те активлăрах ĕçлемеллине асăрхаттарчĕ. Çавăнпа та шалти ĕçсен пайĕнчи пур службăн та пĕр-пĕрин хушшинче тачă çыхăну пулмаллине аса илтерчĕ. Шалти ĕçсен районти пайĕ пĕтĕмĕшле ĕçлеме пултаракан коллектив пулнине, çавна май аслисен опычĕпе çамрăксене тĕплĕрех паллаштармаллине, вĕрентсе пымаллине палăртрĕ. Ĕçе витĕмлĕрех йĕркелемелли меслетсене Шалти ĕçсен министерствинче яланах пăхса тухма тата пулăшма хатĕррине пĕлтерчĕ.

Канашлура çак тата ытти чылай ыйтăва сӳтсе яврĕç. Çавна май Шалти ĕçсен министерствин полици пуçлăхĕн çумĕ районти пĕтĕмĕшле хăрушсăрлăх шайĕ мĕн чухлĕ пысăкрах, район инвесторсемшĕн çавăн чухлĕ илĕртӳллĕрех пулнине аса илтерчĕ. Ку вара районта пурăнакансен пурнăç условийĕпе те çыхăннă.

Район прокурорĕ Валерий Шоркин тата ЧР Следстви управленийĕн Етĕрнери районсем хушшинчи следстви пайĕн ертӳçи Николай Яковлев та хăйсен сĕнĕвĕсене палăртрĕç.

Н. НИКОЛАЕВА.

Тӳрĕ ыйту – тӳрĕ хурав

«Анализ хакĕ мĕншĕн тĕрлĕрен?»

«Тӳрĕ ыйту – тӳрĕ хурав» телефонĕпе черетлĕ шăнкăрав **Ярапайкасси ял тăрăхĕнчи Кӳстерек ялĕнче пурăнакан Лира Бурцевăран** пулчĕ. Хăй каланă тăрăх, килти хуçалăхран хатĕрлевçĕсене сĕт сутакан чылай çынна канăçсăрлантаракан ыйту хускатрĕ.

Ĕçĕ акă мĕнре. Вулакан каласа панă тăрăх, хальхи вăхăтра ял çыннисем хушшинче килти хуçалăхра ĕне выльăха пĕр е икĕ пуç та, виçĕ пуç та тытакан пур. Ытларахăшĕ сунă сĕте куллен е райпо хатĕрлевçисене, е уйрăм предпринимательсене парса ярать. Çынсенчен туянакан сĕт пахалăхне палăртма уйăхсерен продукци анализне ирттереççĕ. Çавна валли хатĕрлевçĕсем çынсенчен туянакан продукци пробисене илеççĕ. Анализа районти выльăх чирĕсемпе кĕрешекен станци лабораторийĕнче е ветеринари участокĕсенче ирттереççĕ. Ку вара тӳлевлĕ. Уншăн сĕт сутакансен тӳлеме тивет.

Лира Бурцева акă мĕн пирки ыйтса пĕлесшĕн. Вăл хăй икĕ ĕнен продукцине сутать. Çавăн пекех килти хуçалăхра виçĕ ĕне тытакансем те пур. Апла пулсан продукцийĕ те кун пеккисен виçĕ ĕнен. Анчах та çынсен анализшăн килти хуçалăхра миçе выльăх пулнине кура мар, мĕн чухлĕ сĕт сутнине кура тӳлеме тивет имĕш. «Акă эпĕ икĕ ĕнерен те виçĕ ĕне тытакансенчен ытларах сутатăп. Çавна май манăн уйăхсерен анализшăн çынсем пек 87 тенкĕ мар, 104 тенкĕ тӳлеме тивет. Анализ ирттересси продукци мĕн чухлĕ сутнипе епле майпа çыхăннă-ши?» – хурав илесшĕн вăл.

Муркаш пасарĕнче сĕт сутакансемпе калаçнă чухне те ку ыйтăва хускатакан тупăннăччĕ. Ветеринари станцийĕнче сĕт сутма справка илнĕ чухне куллен сĕте мĕн чухлĕ сутнине ыйтса интересленеççĕ иккен. Нумайрах сутатăн – ытларах тӳлетĕн, сахалрах пулсан – сахалрах. «Ветстанции справка илме каяс пулсан, эсĕ куллен сĕт мĕн чухлĕ сутнипе интересленсен, 2 – 3 литртан ытла мар тесе кала, тесе тăн пачĕç «ăслăраххисем» мана», – тет вĕсенчен пĕри.

Килти хуçалăхран сĕт сутакансене канăç паман ыйтусене район хаçатĕнче пĕрре кăна мар хускатнăччĕ. Сĕт анализĕн хакĕ пирки те çырман мар. Район хаçачĕн подшивкине юриех уçкаласа пăхрăм. 2017 çулхи августăн 19-мĕшĕнче «Сĕт пахалăхне тĕрĕслетпĕр», çав çулхи ноябрĕн 15-мĕшĕнче «Анализшăн «сăмсаран пăхса» илеççĕ-им?» статьясем кун çути курнăччĕ. Вĕсенче районти выльăх чирĕсемпе кĕрешекен станци специалисчĕсем ăнлантарса панă тăрăх, сĕт сутакан ял çыннисенчен анализшăн пуринчен те – килти хуçалăхра миçе ĕне тытнине тата куллен мĕн чухлĕ продукци сутнине пăхасара кăларассине кура справка хакĕ те тĕрлĕрен пулать.

Кӳстерекре пурăнакан Лира Бурцева сутакан сĕтĕн анализне Шурчари ветеринари участокĕнче ирттереççĕ ĕнтĕ. Çавăнпа та уншăн кунти ветеринари участокĕн ертӳçин Татьяна Львовăн хуравĕ пĕлтерĕшлĕ пулĕ.

Татьяна Ильинична каласа панă тăрăх, ку ыйту çу кунĕсенче ĕнесенчен продукци ытларах илме тытăннă май, апла пулсан сĕте ытларах сутма пуçланă май, чылайăшĕн çуралать. Ял çыннисенчен туянакан сĕт анализне ирттерессипе районти выльăх чирĕсемпе кĕрешекен станцин 2018 çулхи декабрĕн 28-мĕшĕнчи йышăнăвĕ вăйра. Анализшăн çынсенчен илекен укçа тӳлевĕн хакĕ пурин те пĕр пекех – 29 тенкĕ.

Кунсăр пуçне кашни хуçалăхран пухакан сĕт продукчĕ хăрушсăрлăх нормисене тивĕçтерни пирки справка çыраççĕ. Справка хакĕ вара çын продукци уйăхсерен мĕн чухлĕ сутнинчен килет. Калăпăр, хуçалăхран 100 – 500 килограмм сутакансен вăл 58 тенкĕ. 501 – 1000 килограмм сутакансем валли справка хакне 75 тенкĕ çирĕплетнĕ. 1 тоннăран тытăнса 2 тонна таран сутакансем валли справка хакне 89 тенкĕ çирĕплетнĕ.

Пĕтĕмлетӳ: анализ хакĕ пурин те пĕр пекех – 29 тенкĕ, справка хакĕ вара çын сĕт мĕн чухлĕ сутнинчен килет. Тӳлевĕн асăннă йĕркине Чăваш Республикин патшалăх ветеринари службин сĕнĕвĕсене тĕпе хурса кăçалхи январĕн 1-мĕшĕнчен тытăнса вăя кĕртнĕ.

«Тӳрĕ ыйту – тӳрĕ хурав» телефонĕсем: 62-2-82, 8-927-857-42-06.

В. ШАПОШНИКОВ
хатĕрленĕ.

Çут çанталăка упрар

Пыл хурчĕсемшĕн пăшăрханаççĕ

Пĕтĕм Раççейри ял хуçалăх юлашки перепиçĕ тăрăх, Раççейре пыл хурчĕсен çемйисен шучĕ 3 миллион кăна тăрса юлнă. Специалистсен шухăшĕпе вара ӳсен-тăрана шăркалантарма вĕсен йышĕ 7,2 миллионран сахал мар пулмалла. Вунă çулта кăна (икĕ перепиç хушшинчи вăхăт) çак усăллă пыл хурчĕ 18 процент ытла чакнă.

Чăваш Енре те чан çапаççĕ тесен те йăнăш пулмĕ. Россельхознадзорăн республикăри управленине вĕлле хурчĕсен шăпишĕн кулянса çырнă çырусем сахал мар килеççĕ. Тĕрлĕ район çыннине ку ыйту канăç памасть.

Акă Çĕрпӳ районĕнчен çитнĕ çырăва илер. Унта уйсенче хими япалисемпе усă курни тĕлĕшпе кăмăлсăр пулнине палăртаççĕ.

Муркаш районĕнче вара уйсенче хими япалисемпе усă курасси пирки пĕлтермеççĕ те иккен. Пыл хурчĕсем кăна мар, ытти кăпшанкă та пĕтесрен мĕн тума пулать-ши тесе ыйту лартнă асăннă районтан килнĕ çырура.

Çакăн евĕрлĕ çырусем ытти районтан та пулчĕç. Утарçăсен пăшăрханăвĕ пушă вырăнта çуралман, палăртаççĕ специалистсем. Тĕслĕхрен, диметоатах илер. Ăна нумай инсектицидсене – сиенлĕ хурт-кăпшанкăна пĕтерекен хими препарачĕсене – хушаççĕ. Кунашкал препаратсем пыл хурчĕсемшĕн – чăн наркăмăш. Çак инсектицидсемпе пур çĕрте те усă кураççĕ тесен те юрать, кунта йӳнĕ пулни те витĕм кӳрет-тĕр.

Кунсăр пуçне чир-чĕр те хăй киревсĕр ĕçне тăвать. Сăмахран, варроатоз. Пĕлтĕр Раççейĕпе çак чире тупса палăртнă 75 тĕслĕх пулнă.

Чăваш Енре вара иртнĕ çул çĕртекен чир (Европейский гнилец пчел) Муркаш тата Шупашкар районĕсенче шар кăтартнă.

Шел те, тĕрлĕ амакран сипленмелли эмелсем те иккĕленӳллĕ-çке. Россельхознадзор пĕлтернĕ тăрăх, пĕр сайтра кăна регистрацилемен 10 препарат тупса палăртнă. Кунта шăпах пыл хурчĕсен эмелĕсем пирки сăмах пырать.

Çакнашкал пулăмсене малашлăхра сирес тесе калаççĕ хурт-хăмăр ăстисем. Акă Çĕрпӳ районĕнчи опытлă утарçăсем çапла сĕнеççĕ: уйсенче хими япалисемпе сивĕ, сывлăш температури 10–12 градусран пĕчĕкрех чухне усă курмалла. Е каçхине, çичĕ сехет иртсен. Ун чухне пыл хурчĕсем вĕçмеççĕ.

Управление çитнĕ пĕр çыру та тимлĕхсĕр юлман. Пыл хурчĕсен пылак çимĕçĕн пахалăхне те куçран вĕçертмеççĕ специалистсем. Пыла, рационра тивĕçлĕ вырăн йышăннăран, юлашки çулсенче Россельхознадзор ятарлă мониторинг тĕпчевне кĕртет. Раççейĕпе илес пулсан, чăн та, пахалăх тата хăрушсăрлăх енчен тивĕçтермен тĕслĕхсем пулнă пĕлтĕр. Сăмахран, хăрушсăрлăх енчен 1372 партирен 132-шĕ иккĕленӳ çуратнă, пахалăх енчен 203 партирен – 13-шĕ.

Чăваш Республикинче те асăрхаттарусемсĕр пулман, уйрăмах суту-илӳ вырăнĕсенче. Çитменлĕхсене пĕтеричченех лару-тăрăва куçран вĕçертмен тĕрĕслевçĕсем. Çынсене сывлăха çирĕплетме пылак кăна мар, паха пыл кирлĕ-çке.

Н. ВАСИЛЬЕВА,
Россельхознадзорăн Чăваш Республикинчи тата Ульяновск облаçĕнчи управленийĕн ĕçченĕ.

Врач канашĕ

Асăрхануллă пулнине нимĕн те çитмест

Ботулизм çыннăн пурнăçĕшĕн те хăрушлăх кăларса тăратакан наркăмăшлă инфекци чирĕсен шутне кĕрет. Унăн спорисем пысăк температурăна тӳсĕмлĕ, таврара анлă сарăлнă. Кислород çук чухне ку спорăсем аталанаççĕ, токсин кăларма тытăнаççĕ. Ытларах чухне вĕсем консервланă продуктра пулма пултараççĕ.

Ботулизмпа сиенленнин паллисем: пыр кăтăкланать, куçра иккĕллĕ курăнать, çатма тата сывлама йывăрланать, хăстарать, варвитти пулать. Кун пеккине сиссен пĕр тăхтаса тăмасăр тухтăр патне каяс пулать.

Хăвăр çисе наркăмăшланнă консерв продуктне специалистсем кăларса пăрахма сĕнмеççĕ. Ăна лабораторире тĕпчеме тивĕç.

Наркăмăшланас мар тесен, ку е вăл апат-çимĕç продуктне туса хатĕрленĕ, илсе çӳренĕ, усранă чухне санитарипе гигиена правилисене çирĕп пăхăнас пулать. Уйрăмах кăмпана консервланă чухне, кăлпасси, тăварланă е тĕтĕмленĕ пулă çинĕ чухне асăрхануллă та тимлĕ пулмалла. Кун пек продукта çиес умĕн 15 – 20 минутран кая мар шаритлеме е пĕçерме сĕнеççĕ. Вĕрире ботулизм наркăмăшĕ сиенсĕрленет.

Хатĕр продуктсене çĕрпе вараласран асăрханас пулать. Консервсене май пур таран ытларах стерилизацилеме тăрăшмалла. Хупăлчи мăкăрălса тухнă банкăри продукта çиме кирлĕ мар.

Татах тепĕр сĕнӳ: продуктсене уйрăм çынсенчен тата ятарласа уйăрман суту-илӳ вырăнĕсенче туянма кирлĕ мар. Сыхланасси сывалассинчен çăмăлрах пулни пирки нихăçан та ан манăр.

Е. ИЛЬИНА,
гигиенăпа эпидемиологин республика центрĕн эпидемиолог врачĕ.

Полици хроникинчен 12+

Катер «юхса кайнă»

Атăл çывăхĕнче пурăнакансен шывра çӳрекен транспорт хатĕрĕ пулнинчен тĕлĕнмеллех мар. Анчах та ун пек транспорт хатĕрне те вăрлакан пур.

Акă нумаях пулмасть Хунтăкасси ялĕ çывăхĕнче çыранра тăракан катер та тахăшне питĕ килĕшнĕ курăнать. Катера çирĕплетнĕ сăнчăра çĕр каça татса ирччен ăна шывпа юхтарса янă тейĕн. Хуçи ирпе тухнă çĕре катер çухалнă.

Шыв çинче, паллах, йĕр юлмасть. Çапах та уй куçлă, вăрман хăлхаллă, теççĕ. Полицейскисем преступлени тăвакана тупса палăртассипе оперативлă ĕçсене çийĕнчех пуçăннă.

Юлташа та укçа ан парăр

«ВКонтакте» социаллă сетьри страницăна «çĕмĕрсе» ултавçăсем пирĕн районти пĕр хĕрарăм ячĕпе унăн юлташĕсем патне хыпарсем янă. Хальхи вăхăтра, паллах, укçа кирлĕ пирки.

Пĕринчен акă 12 пин тенкĕ таранах ыйтнă. Банк карттин номерне те кăтартнă. Юратьха, сетьри юлташĕ укçа куçарман.

Ку ултав тĕлĕшпе уголовлă ĕç пуçарас ыйту тăрать. Шалти ĕçсен пайĕн сотрудникĕсем ĕçе уçăмлатассипе тимлеççĕ.

Ĕçекен пур – сăмакун юхать

Кашни çыннăн пушă вăхăта усăллă ирттерме чун киленĕçĕ пулмалла. Ун пек чух пурнăç та кăсăклăрах. Уйкас Янасал ял тăрăхĕнче пурăнакан пĕр хĕрарăм та çакна шута илсех пурăннă. Анчах та унăн «хобби» текенни укçа ĕçлесе илессипе тата таврари çемьесене сăтăр тăвассипе çыхăннă.

Полицейскисем аллăран иртнĕ хĕрарăм пушă вăхăтра сăмакун юхтарса сутнине тупса палăртнă. Ĕçлĕ хĕрарăм хăйсен ялĕнчи арçынна 0,250 л кĕрекен кĕленчери сăмакуна 150 тенкĕпе сутнине регистрациленĕ. Килĕнче вара тĕрĕслев вăхăтĕнче сăмакун саппасне те тупнă.

Хĕрарăм тĕлĕшпе уголовлă ĕç пуçарнă. Ку таранччен сăмакун сутса тунă укçа штраф тӳлеме çитĕ-ши?

Ултавçăсем «кредит» илнĕ

Банкран кредит илес текен çынран банк нивушлĕ укçа ыйтать? Кун пеккине ултавçăсем кăна пултараççĕ. Акă Мăн Сĕнтĕр ял тăрăхĕнчи пĕр хĕрарăм патне Мускавра вырнаçнă банкран тесе шăнкăравлаççĕ. Лайăх условисемпе кредит парасса шантараççĕ. Калаçу хыççăн хĕрарăм кредит илме мар, икĕ тĕрлĕ счет çине хăй укçа куçарса парать – 80 пин тенкĕ майлах.

«Кредитне», практика кăтартса панă тăрăх, кун пек лару-тăрура ытларах чух каялла тавăрса памалла маррине, ултавçăсене хăй аллипе хăйех панă пулса тухать.

Юлашки вăхăтра Интернет, кĕсье телефонĕн çыхăнăвсемпе улталанă фактсем питĕ нумай – тимлĕ пулăр.

Мотоблок çинчен ӳксе суранланнă

Мотоблок, ун çумне прицеп кăкарма май пур пулин те, транспорт хатĕрĕ шутланмасть. Вăл – механикăллă транспорт хатĕрĕсен шутне кăна кĕрет. Çавăнпа та унпа пурте усă куракан çулсем çине тухма юрамасть.

2019 çулта республика территорийĕнче мотоблок водителĕсем хутшăннипе çулсем çинче пурĕ 10 инкек пулса иртнĕ. Вĕсенче пилĕк çын суранланнă.

Иртнĕ шăматкун Ивановка ялĕ çывăхĕнче тепĕр инкек пулчĕ. Мотоблокпа пынă арçын, çул çинчи лару-тăрăва тĕрĕс хаклайманнипе, ун çинчен ӳкнĕ. Йывăр сурансемпе ăна Шупашкарти больницăна леçнĕ.

Кун пек инкексене асăрхаттарас тата çулйĕр çинче хăрушсăрлăхпа тивĕçтерес тĕллевпе инспекторсем ку таранччен республикипе 52 çынна, мотоблокпа çӳрекенсене, административлă явап тыттарнă. Пирĕн районта административлă протокол пурĕ 6 çырнă.

Пичете РФ Шалти ĕçсен министерствин Муркаш районĕнчи пайĕн материалĕсем тăрăх хатĕрленĕ.

Общество канашĕн ларăвĕнчен

Укçине икĕ хут сахалрах пар, тимлĕхне – икĕ хут ытларах

Шалти ĕçсен министерствин районти пайĕ çумĕнчи общество канашĕн черетлĕ ларăвĕнче çул çитменнисене хăрушсăрлăхпа тивĕçтерессин ыйтăвне тишкерчĕç, ачасемпе çамрăксем тунă преступленисене сӳтсе явăрĕç. Çапах та калаçăва кирек мĕнрен пуçласан та, унăн вĕçĕ йĕркене пăснă ачасен ашшĕ-амăшĕпе тата эрех ĕçекен ашшĕ-амăшĕпе ытларах ĕçлемелли куçкĕрет тени патне тухрĕ.

Канаш ларăвне çул çитменнисемпе ĕçлекен инспектор Оксана Воробьева хутшăннă май, иртнĕ çур çулти ĕçпе паллаштарчĕ. Çак вăхăтра пурĕ пилĕк ача 3 преступлени тунине пĕлтерчĕ. Июлĕн 1-мĕшĕ тĕлне районти шалти ĕçсен пайĕнче 30 ача учетра тăнине палăртса, инспектор вĕсенчен 22-шĕ шкулта вĕренекенсем пулнине каларĕ. Çул çитменнисем тунă преступленисем пирки каланă май, вăл кăçал пулса иртнĕ фактсем çинче чарăнчĕ.

Акă пĕри. Çул çитменнисем, 3 тата 5 класс пĕтернĕ ачасем, строительство ĕçĕсем пыракан пĕр çурт çинчен видеокамера вăрланă. Инспекторсем, профилактика ĕçне пурнăçлакан ытти специалист ачасене кун пек ĕç йĕркене пăсни пулать тесе ăнлантарма тăрăшнă пулсан, ачасен ашшĕ-амăшне урăххи интереслентернĕ. Камерăсене мĕншĕн сыхламан тата мĕншĕн çӳлерех çакман?

Тепĕр тĕслĕх: çул çитмен сакăр ача çуралнă кун тума пухăннă. Унччен вара аслă юлташĕнчен, 18 çул тултарнăскертен, пулăшу ыйтнă. Лешĕ хирĕçлемен, 6 кĕленче сăра тата 2 кĕленче хĕрлĕ эрех туянса панă. Çакна вĕсем йĕркеллĕ пулăм тесе шутланинче ашшĕ-амăшĕн айăпĕ пурах. Çапах та инспектор каланă тăрăх, ашшĕ-амăшĕ ачисене хӳтĕлеме тăрăшать. Халĕ ачанне-и, аслă çыннăнне-и – çуралнă кунсене эрехпе «чаплăн» паллă тăвасси модăра-çке. Тумтир модăра пулсан та, пурне те каймасть. Уявсемпе те çаплах: сĕтел çинче эрех ларни уявăн чапне кăтартмасть...

Ашшĕ-амăшĕсен чавса сывăх та çыртма çук текен лару-тăрăва лекмелле ан пултăр, паллах. Анчах та хăйне таккасах урай çутаракан, ытти ĕçе пурнăçлаттаракан ашшĕ-амăшĕ çине заявлени çырас текен çамрăксем те пулман мар районта. Çапларах воспитани пулнă çемьере: малтан нимĕнле ĕç те пурнăçлаттарман ачаран кайран мĕн кĕтĕн-ши? Ахальтен каламан çав авалхи ăсчахсем, ачана укçине икĕ хут сахалрах пар, тимлĕхне вара икĕ хут ытларах уйăр, тесе.

Ашшĕ-амăшĕн ответлăхĕ пирки сăмах пуçарса, Муркаш шкул директорĕ Николай Смирнов шкулсенче, уйрăммăн илсен райцентрти шкулта, воспитани ĕçне пысăк тимлĕх уйăрнине палăртрĕ. «Ашшĕ-амăшĕ ачине урăх хаклăлăхсем çине тайăнса ӳстерет пулсан, шкул ĕçĕн витĕмĕ те самаях чакать», – терĕ вăл.

Общество канашĕн председателĕ Петр Воробьев та, канаш членĕсем те полицейскисемпе общественноçăн ку тĕлĕшри профилактика ĕçне ашшĕ-амăшĕпе ытларах туса ирттермеллине палăртрĕç. Хăш чухне ĕçе адреслă йĕркелемелли те куçкĕрет.

Н. НИКОЛАЕВА.

ИЗВЕЩЕНИЕ О ПРОВЕДЕНИИ СОБРАНИЯ О СОГЛАСОВАНИИ МЕСТОПОЛОЖЕНИЯ ГРАНИЦЫ ЗЕМЕЛЬНОГО УЧАСТКА

Кадастровым инженером Кольцовым Алексеем Валериевичем, E-mail: arshin21@yandex.ru, контактный телефон: 8(83541)63-4-39, почтовый адрес: 429530, Чувашская Республика, Моргаушский р-н, с. Моргауши, ул. Ленина, д. 41/5, № квалификационного аттестата: 21-11-27, являющимся членом СРО "Гильдия Кадастровых Инженеров №801/10-16 от 13.10.2016 г. ., СНИЛС 074-075-154-55, номер регистрации в государственном реестре лиц, осуществляющих кадастровую деятельность №8052, выполняются кадастровые работы в отношении земельного участка с кадастровым номером 21:17:050301:18, расположенного по адресу: Чувашская Республика, Моргаушский р-н, с. Большое Карачкино, ул. Центральная 18.

Заказчиком кадастровых работ является Александрова Вера Нестеровна, проживающая по адресу: Чувашская Республика, Моргаушский р-н, с. Большое Карачкино, ул. Центральная 18.

Собрание по поводу согласования местоположения границы земельного участка состоится по адресу: Чувашская Республика, Моргаушский р-н, с. Большое Карачкино, ул. Центральная 18.

18.08.2019 г. в 9 часов 00 мин.

С проектом межевого плана земельного участка можно ознакомиться по адресу: 429530, Чувашская Республика с. Моргауши, ул. Ленина, д. 41/5 в межевой организации ООО «Аршин».

Требования о проведении согласования местоположения границ земельных участков на местности принимаются с 17.07.2019 г. по 17.08.2019 г., обоснованные возражения о местоположении границ земельных участков после ознакомления с проектом межевого плана принимаются с 17.07.2019 г. по 17.08.2019 г. по адресу: Чувашская Республика-Чувашия, Моргаушский р-н, с. Моргауши, ул. Ленина, д. 41/5.

Смежные земельные участки, в отношении местоположения границ которых проводится согласование: кадастровый номер 21:17:050301:19, расположенного по адресу: Чувашская Республика, Моргаушский р-н, с. Большое Карачкино, ул. Центральная ,19.

При проведении согласования местоположения границ при себе необходимо иметь документ, удостоверяющий личность, а также документы о правах на земельный участок (часть 12 статьи 39, часть 2 статьи 40 Федерального закона от 24 июля 2007г. №221-ФЗ «О кадастровой деятельности»).

КУПЛЮ / ТУЯНАТĂП

Куплю КОРОВ на мясо; БЫЧКОВ от 10 дней до 500 кг; ТЕЛОК. Тел. 8-937-951-19-03. 20-33.

* * *

КУПЛЮ КОРОВ, БЫЧКОВ, ТЕЛОК, ЛОШАДЕЙ, ОВЕЦ. ДОРОГО. Старых, молодых в любом состоянии и вынужденный забой. Тел. 8-905-197-61-66. 5-10.

* * *

КУПЛЮ КОРОВ, БЫЧКОВ, ТЕЛОК до 800 кг, ВЫНУЖДЕННЫЙ УБОЙ. Тел. 8-927-851-27-77. 10-10.

* * *

ĔНЕ, ВĂКĂР, ТЫНА ПĂРУСЕМ, СУРĂХСЕМ ИЛЕТПĔР. Тел. 8-905-341-69-25. 1-10.

КУПЛЮ БЫЧКОВ от месяца до 600 кг. КОРОВ. ТЕЛОК. ВЫНУЖДЕННЫЙ ЗАБОЙ. Тел. 8-937-952-33-80. 1-5.

* * *

КУПЛЮ КОРОВ, БЫЧКОВ от месяца на откорм. ДОРОГО. Тел. 8-937-391-23-33. 1-5.

* * *

Куплю: КОРОВ, бычков, телок от 1 месяца, ВЫНУЖДЕННЫЙ ЗАБОЙ. Дорого. Тел. 8-961-345-77-89. 20-33.

* * *

ДОРОГО КУПИМ КОРОВ, БЫКОВ, ОВЕЦ, КОЗ. Тел. 8-937-390-29-62. 1-2.

КРОВЛЯ
ЛЮБОЙ СЛОЖНОСТИ
Работаем быстро, качественно, дешево. Поможем подобрать и доставить стройматериалы по низким ценам.
Цены ниже, чем на рынке.
КЛАДКА, ФУНДАМЕНТНЫЕ работы.
Тел.: 8-905-342-00-70. 7-10.

ПРОДАЮ: ПЕСОК, ОПГС (ГРАВМАССА), ПГС, ЩЕБЕНЬ, КЕРАМЗИТ и другое. ДОСТАВКА из с. МОРГАУШИ. НЕДОРОГО. Тел. 8-927-862-42-44. 3-10.

ПЛАСТИКОВЫЕ ОКНА REHAU
от 2900 руб./кв.м
ДВЕРИ (межкомнатные, металлические)
НАТЯЖНЫЕ ПОТОЛКИ
ГАРАЖНЫЕ ВОРОТА
ЗАМЕР, ДОСТАВКА, УСТАНОВКА.
Пенсионерам – скидки!
Тел. 8-927-844-78-11. 2-10.

Кивелнĕ ЭЛЕКТРОПРОВОДКА – пушар хăрушлăхĕ! Кил-çурти электропроводкăна, счетчика улăштаратпăр.
Тел. 8-937-015-35-40. 3-10.

НАТЯЖНЫЕ ПОТОЛКИ
любой сложности.
Подарки. Скидки. Гарантия 10 лет. Тел. 22-95-11, 8-917-078-95-11. 10-10.

Продаю дом с надворными постройками в д. Хорной, ул. Чиганары, 36, земля 41 сот. Цена – 350 тыс. руб., торг. Тел. 8-953-011-42-41, 8-908-732-13-23.

* * *

Продаю комнату-гостинку в г. Чебоксары, ул. Мате Залка, д. 12, корпус 1, 7 этаж. Удобства на 2 комнаты (кухня, туалет, душевая). Один собственник, никто не прописан, долгов нет. Тел. 8-927-863-26-25.

* * *

Продается корова черно-белого окраса после 4-ого отела вместе с одномесячным упитанным теленком. Удой и жирность молока на высоком уровне. Ярабайкасинское с/п. Тел. 8-953-012-67-02.

* * *

Продаю бычков от 1 до 3 месяцев. Тел. 8-905-029-67-90.

* * *

Сдаю комнату в центре с. Моргауши. Тел. 8-905-199-91-34.

* * *

Продаю 3-хкомн. квартиру в с. Юськасы, ул. Совхозная, д. 1. Тел. 8-903-063-34-00. 2-5.

* * *

Продаю березовые дрова. Тел. 8-996-850-86-87.

* * *

Военный специалист с большим опытом работы по аккумуляторам: разряжаю, заряжаю, провожу КТЦ, снимаю сульфатацию. Гарантия. Тел. 62-5-83, 8-967-794-08-42.

РАБОТА / ĔÇ

Требуются рабочие на уборку картофеля в Н. Новгород. Тел. 8-908-723-74-73. 1-7.

* * *

Требуется водитель категории B,C,D. Тел. 8-960-302-83-49, Евгений. 1-2.

Прогноз погоды

По данным сайта rp5.ru

	Среда				Четверг				Пятница				Суббота			
Местное время	03	09	15	21	03	09	15	21	03	09	15	21	03	09	15	21
Облачность %																
Явления погоды																
Температура																
Ощущается	+14	+18	+19	+16	+14	+18	+24	+18	+14	+23	+26	+17	+14	+20	+22	+16
Давление	745	746	744	742	741	740	741	742	743	744	744	744	744	745	745	746
Ветер	2	4	6	5	4	3	2	2	2	4	5	2	3	4	6	4

Объявления

Продаем пиломатериалы обрезные, кровельные 25 мм, половые 50 мм, брус любого размера; цемент. Доставка бесплатно. Цена договорная. Тел. 8-903-346-40-58, 8-927-996-16-52. 18-20.

НАТЯЖНЫЕ ПОТОЛКИ
Тел. 8-927-667-40-92. 2-46.

Продаем: доски 25-50 мм (обрезные, необрезные), брус любого сечения, жерди, подтоварник. Цена договорная. Доставка по району бесплатно. Тел. 8-927-667-28-32, 8-919-679-18-11. 10-10.

Внимание! АКЦИЯ!
До 1 сентября 2019 г. в ООО «БТИ» межевание земель 60 соток всего за 4900 руб! Пенсионерам и ветеранам боевых действий – скидки!
Тел. 8(83541) 63-2-34, 62-0-15. 3-5.

Песок, щебень, гравмасса, бой кирпича, асфальтная крошка. Доставка. Тел. 8-927-857-21-33, 8-937-393-37-07. 25-62.

* * *

Продаю: **песок, бой кирпича, гравмассу, щебень, торф.** Доставка. 8-996-949-09-54. 19-20.

* * *

Продаю: Песок. Гравмассу. Навоз. Чернозем. Грунт. Гравий. Щебень. Бой кирпича. Доставка до 15 тонн. Недорого.Тел. 8-905-198-63-88. 6-11.

* * *

Продаю **бой кирпича и бетона разных фракций, щебень, гравмассу, песок, асфальтную крошку, чернозем, торф,** вывоз строительного мусора. Тел. 8-917-676-93-79, 8-961-347-25-47. 9-10.

* * *

ПЕСОК РЕЧНОЙ, КАРЬЕРНЫЙ, ГРАВМАССА, БОЙ КИРПИЧА, ЩЕБЕНЬ, ГРУНТ и т.д. Доставка по Моргаушскому району. НЕДОРОГО. Тел. 8-905-345-96-62. 10-10.

* * *

ПРОДАЮ: ГРАВМАССУ, ПЕСОК, БОЙ КИРПИЧА, ЩЕБЕНЬ, ТОРФ. Доставка. Тел. 8-905-028-22-25. 8-10.

* * *

Песок, гравмасса (ОПГС), щебень (известковый, гранитный). Недорого. Доставка. Тел. 8-987-667-42-51. 6-10.

* * *

Все виды строительных работ. Дома и бани под ключ, кровля любой сложности. Внутренняя и внешняя отделка, отделка домов сайдингом. Смета бесплатно. Тел. 8-927-865-60-00, 8-987-670-56-78. 7-10.

* * *

Фундамент, кирпичная кладка, кровля любой сложности. Деревянные дома и бани, отделка домов сайдингом. Смета бесплатно. Тел. 8-927-992-32-42. 7-10.

* * *

Песок, щебень, гравмасса, бой кирпича, асфальтная крошка. Доставка. Тел. 8-917-675-35-75. 2-6.

* * *

ЗАБОРЫ ИЗ СЕТКИ-РАБИЦЫ, СВАРНОЙ СЕТКИ, ПРОФНАСТИЛА, ЕВРОШТАКЕТНИКА. ВОРОТА, КАЛИТКИ, НАВЕСЫ, КОЗЫРЬКИ. БЛАГОУСТРОЙСТВО ЗАБРОШЕННЫХ УЧАСТКОВ. ПЕНСИОНЕРАМ – СКИДКИ. Тел. 8-937-942-87-85. 2-15.

* * *

Услуги мини-экскаватора, ширина ковша: 30 см, 35 см, 45 см, 55 см. Глубина копания 3 метра. Час работы мини-экскаватора 1000 руб. плюс доставка. Прокладка труб под асфальт методом прокола до 10 м. Бурение скважин на воду, цена 1600 руб. за 1 метр. Работаем за наличный и безналичный расчет. Тел. 8-927-847-85-59, 8-962-599-04-70. 1-3.

* * *

Строительная бригада выполнит работы: кровля, отделка сайдингом и т.д. Тел. 8-900-331-65-99, 8-952-025-71-22.

* * *

Бройлер, хур, кăвакал, мулард, кăркка чĕпписене сутатпăр. Нумай илекенсене леçсех паратпăр. Тел. 8-937-395-16-03, 8-906-130-82-51. 1-10.

ТАВ ТĂВАТПĂР

Муркаш ялĕнче пурăннă Леонид Семенович Семенова тата Надежда Матвеевна Семеновăна юлашки çула ăсатма пулăшнăшăн, пирĕн йывăр хуйха пирĕнпе пĕрле пайланăшăн тăвансене, ял-йыша, пускилсене, унта пынă мĕнпур çынна чĕререн тухакан тав сăмахĕ калатпăр. Эсир ырă туни сире каялла ырăпах таврăнтăр.

Ачисемпе мăнукĕсем.

Муркашри пĕтĕмĕшле пĕлӳ паракан вăтам шкул коллективĕ кунта технологипе ИЗО предметне вĕрентекен Л.В. Васильеван мăшăрĕ

Андрей Евтихеевич ВАСИЛЬЕВ

вăхăтсăр вилсе кайнă пирки çемйипе, тăванĕсемпе пĕрле чĕререн хурланни çинчен пĕлтерет.

Муркаш районĕнчи «Çĕнтерӳ ялавĕ» хаçат

УЧРЕДИТЕЛЬСЕМ:
Чăваш Республикин Цифра аталанăвĕпе информаци политикин тата массăллă коммуникацисен министерстви.
ЧР Цифра аталанăвĕпе информаци политикин тата массăллă коммуникацисен министерствин "Муркаш районĕн «Çĕнтерӳ ялавĕ» хаçат редакцийĕ» Чăваш Республикин хăй тытăмлă учрежденийĕ.

Тĕп редактор А.И. ТИХОНОВ.

Редакципе издатель адресĕ: 429530, Чăваш Республики, Муркаш ялĕ, Мир урамĕ, 9А çурт.
Телефонсем: тĕп редактор – 62-1-36, бухгалтери – 62-1-35,
пайсем: общество пурнăç пайĕ – 62-2-82, экономика тата социаллă пурнăç пайĕсем – 62-1-38.
Факс: 62-1-36. E-mail: smi24@cap.ru, smi24-1@cap.ru, redaction_morgau@mail.ru

Сыхăну, информаци технологийĕсен тата массăллă коммуникаци сферине пăхса тăракан Федераллă службăн Чăваш Республикипе – Чăваш Енпе ĕçлекен управленийĕ 2012 çулхи юпа уйăхĕн 11-мĕшĕнче ПИ ТУ 21-00249 № регистрациленĕ.

Калăпăшĕ 1 пичет листи.
Ал сырăвĕсене рецензилемеççĕ, каялла тавăрса памаççĕ, 2 страницăран пысăкраххисене йышăнмаççĕ.
Рекламăпа пĕлтерӳсен чăнлăхĕшĕн вĕсене паракансем яваплă.

Р– реклама материалĕ.

ИЗДАНИ ИНДЕКСĔ: П2851.
Хаçат юнкунсерен тата шăматкунсерен тухать.
Номер дежурнăйĕ Р.А.Макарова.
Пичете панă 16.07.2019 ç.
Пичете памалли вăхăт: графикпа – 16 сех. 20 мин., чăннипе – 16 сех. 20 мин.
Заказ Тираж 4258.

Номер набран и сверстан в АУ ЧР «Редакция Моргаушской районной газеты «Çĕнтерӳ ялавĕ», отпечатан в типографии АО «ИПК «Чувашия»: 428019 г. Чебоксары, пр. И. Яковлева,13. Качество печати соответствует оттискам, предоставленным редакцией.